

# Чăваш литератури тĕнче анлăхне тухрĕ

Чăваш Республикин Наци библиотеки хăйĕн 150 çулхи тапхăрĕнче халăха литературăпа тивĕçтерес, çыравçăсен çĕнĕ хайлавĕсене вулакан патне çитерес тĕллевпе тăрăшса нумай ĕç туса пынă. Тĕрлĕ куравпа литература каçĕ, çĕнĕ кĕнеке хăтлавĕ (презентаци(, «çавра сĕтел», конференци ирттернĕ, çыравçăсемпе вулакансен тĕлпулăвĕсене йĕркеленĕ.

Халăха кĕнекепе çывăхлатас, вулама хăнăхтарас, илентерес тата чăваш сăмах ăстисен чи лайăх хайлавĕсене халăх хушшинче сарас тĕллевпе библиотекăра 1992 çултан пуçласа çулсерен **«Литературăллă Чăваш Ен: çулталăкри чи нумай вуланакан кĕнеке»** республика конкурсне ирттересси йăлана кĕнĕ. Çак акци-конкурса çулталăк хушшинче чăвашла тата вырăсла пичетленсе тухнă илемлĕ литература хайлавĕсем хутшăнаççĕ. Вĕсене кĕнеке вулакансем тĕрлĕ номинацире палăртаççĕ: проза, поэзи, драматурги, ача-пăча литератури, чăваш çыравçисем куçарнă илемлĕ литература хайлавĕсем тата ытти те. Çак çулсенче чи нумай вуланакан кĕнеке ята В. Давыдов-Анатрин «Асатте парни», Р. Сарпин «Çăлтăр çумăрĕ», Петĕр Яккусенĕн «Çавра кӳлĕ», Н. Ыдарайăн «Савăк вăхăт», Н. Петровскаян «Ахрăм», Н.Ишентейĕн «Çавра кӳлĕ хĕрринче», Е. Лисинăн «Улăхпи», Л. Саринен «Чĕрĕп инке», Л. Сачковăн «Шăпăрлан», Улькка Эльменĕн «Упраймарăм сана» тата ытти чылай çыравçăн хайлавĕсем тивĕçрĕç. Паллах, çак конкурс авторсене çĕнĕ хайлавсем çырма хавхалантарать, вулакансен шухăш-кăмăлне, вĕсем мĕнлерех хайлавсем кĕтнине пĕлме май парать. Çĕнтерӳçĕсене чысласси яланах Чăваш чĕлхин кунĕ умĕн иртни тăван çав уява питĕ пуянлатать, чăваш сăмахĕн сумне ӳстерет.

Библиотекăн тĕллевĕсенчен пĕри – кĕнекене вулакан патне çитересси, унăн вулав культурине ӳстересси. Çакна пурнăçлама паянхи кун çĕнĕ технологисемпе тухăçлă тата анлă усă курни пулăшать. **Чăваш Республикин наци библиотеки кĕнекесене интернет уçлăхĕнче вуламалли майсем туса парать.** Вĕсенчен пĕри – **«Чăваш Ен литература картти».** Вăл библиоте-

кăн сайтĕнче вырнаçнă, 2015 çултанпа пурнăça кĕрсе пырать. Унпа усă курма питĕ ансат. Информацие чăвашла тата вырăсла панă, вĕсем çакăн пек пайсенче вырнаçнă: «Персонăсем», «Географи кăтарткăçĕ», «Чăваш литератури çинчен», «Литература премийĕсем», «Литература пĕрлешĕвĕсем», «Литература пулăмĕсем», «Кĕнеке вырăнĕсем», «Вулав залĕ». «Чăваш Ен литература картти» республикăн тĕрлĕ районĕнчен тата ытти регионта çуралса ӳснĕ çыравçăсем çинчен пĕлме тата вĕсен хайлавĕсене вулама май парать, литература пурнăçĕнчи пулăмсемпе паллаштарать, вулакансене чăваш литератури паянхи пуян та нумай енлĕ пурнăçне кăтартса парать. Чи лайăх кĕнекисене вулакан патне çитерме пулăшать, çынсене вулама хавхалантарать. Паянхи куна кунта пурĕ 490 çыравçă пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен çырнă биографи тата библиографи справкисем тата 700 яхăн илемлĕ литература хайлавĕн тексчĕ вырăн тупнă.

Культура эткерлĕхĕ – халăхăн ăс-хакăл культурин пуянлăхĕ. Вăл наукăна, пĕлĕве тата культурăна хăват парать. Çут çанталăк пуянлăхĕсемпе танах халăхăн хăйне хисеплемелли тата пĕтĕм тĕнчери пĕрлĕх тесе йышăнмалли никĕс шутланать. Библиотекăн тепĕр пысăк проекчĕ – «Чăваш Енĕн культура эткерĕ» портал. Кунта чăваш халăх историйĕ, культури, йăли-йĕрки, литератури, паллă çыннисем çинчен çырнă материалсем вырăн тупнă. Чăваш çыравçисем çинчен çырнă информацие уйрăм пая кăларнă. Вулакан кунта XIX-XX ĕмĕрсенчи çыравçăсемпе литература тĕпчевçисем çинчен кăна мар, паянхи çыравçăсем çинчен те тĕплĕнрех пĕлме, вĕсен пурнăçĕн çул-йĕрĕ, пултарулăх пирки çырнă литературăпа та, çыравçăсен хайлавĕсен тексчĕсемпе те паллашма пултарать. Парталпа пĕрмаях ĕçлетпĕр, информацисене тĕрĕслесе, çĕнĕ ятсемпе хайлавсем хушсах тăратпăр.

Раççейри Литература çулталăкĕ, Чăваш Енри Константин Иванов çулталăкĕ историе кĕрсе юлчĕç. Наци библиотеки те Литература тата Константин Иванов çулталăкĕсене ăнăçлă ирттерчĕ: чылай пысăк пĕлтерĕшлĕ проектсем пурнăça кĕчĕç. Вĕсенчен **«Нарспие» вулатпăр»** тата **«Чăваш литературин ылтăн çӳпçи: вуламалли 100 кĕнеке»** проектсене уйрăммăн палăртмалла.

«Нарспие» вулатпăр» проект – тĕнче шайĕнчи акци. Вăл 29 çĕршыври тата 45 хулари çынсене пĕрлештерчĕ: Раççей, Китай, Америка, Франци, Германи, Канада, Испани, Англи, Инди, Турци, Австрали, Венгри, Финлянди çĕршывĕсенчи тата ытти патшалăхри тĕрлĕ ӳсĕмри, тĕрлĕ профессири çынсем вилĕмсĕр «Нарспи» поэмăна тĕрлĕ чĕлхепе вуларĕç. Константин Ивановăн гениллĕ хайлавĕ 20 чĕлхепе янăрарĕ. Çак акци тĕрлĕ çĕршыври çынсене чăваш халăхĕн те тĕнче шайĕнчи поэт пуррине кăтартрĕ, К.В. Ивановăн пултарулăхĕпе паллаштарчĕ.

«Чăваш литературин ылтăн çӳпçи: вуламалли 100 кĕнеке» интернет-акцие наци литературин чи лайăх хайлавĕсене халăхра сарас тĕллевпе йĕркеленĕ. Интернет-сасăлава тата хайлавсене пахалас ĕçе 2000 ытла çын хутшăннă. Эксперт канашĕ /унта тĕпчевçĕсем, журналистсем, вĕрентекенсем, çыравçăсем, библиотека ĕçченĕсем кĕнĕччĕ/ акци пĕтĕмлетĕвĕсемпе 100 чăваш çыравçин хайлавĕсен списокне çирĕплетрĕ. Унта XVIII ĕмĕр варринчен пуçласа XXI ĕмĕр таран тĕрлĕ жанрпа çырнă илемлĕ литература тата ăслăлăх литератури кĕнĕ. Хайлавсем çынлăх идейисене, истори тата культура йăлисене, Чăваш Ен аталанăвне анлăн та уçăмлăн кăтартса параççĕ. Библиотека ĕçченĕсем суйласа илнĕ хайлавсенчен электронлă коллекци хатĕрлерĕç, уйрăм сайтра вырнаçтарчĕç. Коллекцие кĕнĕ кĕнекесенчен чылайăшне халĕ би-

блиотекăсенче тупма çук, тахçанах кăларнипе вĕсем кивелнĕ. Паянхи кун «Чăваш литературин ылтăн çӳпçи: вуламалли 100 кĕнекене» кĕнĕ хайлавсене библиотека сайтне кĕрсе тĕнчен тĕрлĕ кĕтесĕнче те вулама пулать.

Хальхи вăхăтра чăваш кĕнекине вулама çеç мар, итлеме те питĕ лайăх майсем пур библиотекăра. «Чăваш литературин ылтăн çӳпçине» кĕнĕ хайлавсене халăх хушшинче сарас тата çамрăксене вулама хавхалантарас тĕллевпе аудиокĕнекесем хатĕрлетпĕр, сасăлатпăр. Ку май куç курман çынсем валли уйрăмах паха. Пĕрремĕш аудиокĕнекене 2014 çултах йĕркеленĕччĕ. Вăл «Хамăра тата пулас ăру валли вулатпăр» ятпа тухрĕ. Унта республикăри «Литературăллă Чăваш Ен: çулталăкри чи нумай вуланакан кĕнеке» конкурс çĕнтерӳçисем кĕнĕ: Улькка Эльменĕн «Упраймарăм сана», Раиса Сарпин «Тăрнаккай» тата «Пукане», Светлана Гордеевăн «Хаваслă карусель», Ева Лисинăн «Вĕçекен кӳлĕ», Марина Карягинăн «Кăтра хĕвелçаврăнăш» тата ыттисем. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче çĕнтернĕренпе 70 тата 75 çулсем çитнине уявланă тĕлелле библиотека «Ачасем валли Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи çинчен вулатпăр» ятлă икĕ кăларăмран тăракан аудиокĕнекесем хатĕрлерĕ. Унта чăваш çыравçисен Илпек Микулайĕн, Мария Ухсайăн, Светлана Асаматăн, Юрий Сементерĕн, Куçма Турханăн, Ухсай Яккăвĕпе Петĕр Хусанкайăн тата ытти чăваш çыравçин, Сергей Алексеевпа Ольга Громова вырăс писателĕсен хайлавĕсем кĕнĕ. Аудиокĕнекесем пурте Наци электронлă библиотекин пайĕ пулса тăчĕç. Ку ĕçре библиотекăна Чăваш наци радиовĕ пулăшать. Хайлавсене Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ Чăваш патшалăх çамрăксен, Шупашкарти вырăс драма тата Чăваш патшалăх академи драма театрĕсен артисчĕсем вулаççĕ. Ку ĕç малалла пырать, ăна паян Чăваш Республикин наци библиотеки Наци ĕçĕсен федераци агентстви тата Чăваш Республикин культура, национальноçсен ĕçĕсен тата архив ĕçĕн министерстви пулăшнипе туса пырать.

«Чăваш литературин ылтăн çӳпçи: вуламалли 100 кĕнеке» проекта тĕпе хурса 2020 çулта библиотека вулакансен референдумне ирттерчĕ. Унăн тĕллевĕ: наци литературин чи паха тĕслĕхĕсене палăртса анлă сарасси, вулакансен, вулавăшсен хастарлăхне ӳстересси. Референдум тапхăрĕнче вулакансем асăннă сайтра кăмăла кайнă кĕнекешĕн (хайлавшăн/ сасăлама пултарчĕç. Унта 5000 ытла çын хăйĕн сассине килĕшнĕ кĕнекешĕн пачĕ. Сасăлава хутшăнакансем Раççейĕн тĕрлĕ регионĕнчен пулчĕç: Чăваш, Тутар, Мари, Пушкăрт республикисенчен, Чĕмпĕр, Самар, Красноярск, Тюмень, Мускав облаçĕсенчен, Ямал-Ненец автономи округĕнчен, унсăр пуçне Мускав, Хусан, Тюмень, Ĕпхӳ, Чĕмпĕр, Ростов, Иваново хулисенчен. Чи нумай сасă /1271/ пухса «Çĕр çуллăхри кĕнеке» ята Чăваш халăх писателĕн Александр Артемьевăн «Саламппи» хайлавĕ тивĕçрĕ. Çĕнтерӳçĕ дипломне çыравçăн хĕрĕ Александра Артемьева илчĕ. Александра Александровна Чăваш Республикин наци библиотекине çак акцие пуçарса янăшăн, пултарулă писателĕн эткерне сыхласа хăварас тĕлĕшпе нумай ĕçленĕшĕн ăшшăн тав турĕ.

«Саламписĕр» пуçне чи килĕшнĕ 10 кĕнеке шутне тата çак хайлавсем кĕчĕç: Константин Ивановăн «Нарспи», Леонид Агаковăн «Ылтăн вăчăра» тата «Юманлăхра çапла пулнă», Геннадий Волковăн «Кил илемĕ», «Юманпа Хĕвел», Илпек Микулайĕн «Хура çăкăр», Никифор Мранькккан «Ĕмĕр сакки сарлака», Валентина Элпин «Пулас кинсем», Георгий Орловăн «Вутри юрату», Трубина Мархвин «Ача чухнехи».

Республикăри вулавăшсем тĕрлĕ енлĕ мероприятисем /литература урокĕсем, куравсем, тĕлпулусем/ ирттерсе акцие хастар хутшăнчĕç, референду-

ма халăх хушшинче сарассипе чылай ĕçлерĕç. Ку енĕпе уйрăмах Шупашкар, Тăвай, Йĕпреç районĕсен библиотекисем пысăк пуçарулăх кăтартрĕç, уявра вĕсен ертӳçисене Тав хучĕпе тата паха парнесемпе чысларĕç. Акцие Чăваш автономи облаçне йĕркеленĕренпе 100 çул çитнине халалланă.

2015 çулхи раштавăн 18-мĕшĕнче Чăваш Республикин наци библиотекинче Раççейри Литература, Чăваш Енри Константин Иванов çулталăкне хупнине халалласа **«Вулакан Чăваш Ен»** форум иртрĕ. Çак уява Мускаври, Санкт-Петербургри, Чĕмпĕрти çыравçăсемпе библиотекарьсем килсе çитрĕç. Чи малтанах çыравçăсен пресс-конференцийĕ иртрĕ. Форума хутшăнакансемшĕн «Литераторсен пурнăçĕпе пултарулăхĕ архив докуменчĕсенче» ятпа иртнĕ «çавра сĕтел» кăсăклă пулчĕ.

Форумăн пĕр лапамĕнче «Чăваш литературин антологийĕн» 4-мĕш томĕн /XIX-XXI ĕмĕрсенчи çыравçăсен ачасемпе çамрăксем валли çырнă хайлавĕсем кĕнĕ, пурĕ – 180 автор/ тата «Чувашский рассказ. Дети леса» Чăваш калавĕ. Вăрман ачисем» кĕнекесен презентацийĕ иртрĕ. Борис Чиндыков драматург «Чăваш калавĕ. Вăрман ачисем» кĕнекере Çеçпĕл Мишшин, Трубина Мархвин, Çемен Элкерĕн тата ытти сăмах ăстин произведенийĕсен вырăсла куçарăвĕсене пухнă.

«Вулакан Чăваш Ен» форумăн тепĕр лапамĕнче «Литературăн паянхи пурнăçри пĕлтерĕшĕ» «çавра сĕтел» чăваш çыравçисене, поэтсене, çамрăксен кăларăмĕсен редакторĕсене, аслă шкул вĕрентекенĕсене пуçтарчĕ. «Çавра сĕтелре» паянхи ăрăва кĕнеке, хаçат-журнал вулама епле илĕртмелли тавра калаçрĕç. Çамрăк поэтсемпе çыравçăсен пултарулăхне те сӳтсе яврĕç кунта. Форум ĕçне Сергей Георгиевпа Александр Дашко ача-пăча çыравçисем те хутшăнчĕç.

Республикăра Раççей халăхĕсен поэзийĕн «Атăл асамачĕ» фестивале ирттересси йăлана кĕчĕ ĕнтĕ. Вăл Наци ĕçĕсен федераци агентстви тата Чăваш Республикин культура, национальноçсен ĕçĕсен тата архив ĕçĕн министерстви пулăшнипе иртет. Пĕрремĕш фестиваль 2018 çулхи çу уйăхĕнче иртнĕччĕ. Ăна чăваш культурин патриархĕ И.Я. Яковлев çуралнăранпа 170 çул çитнине халалланă. Çав тапхăрта Шупашкар Мускавран, Тутар, Мари, Мордва, Дагестан, Коми Республикисенчен, Чĕмпĕр облаçĕнчен килнĕ пултаруллă сăвăçсемпе прозаиксемшĕн литературăн тĕп хули пулса тăчĕ. Ăна йĕркелекенĕ Чăваш халăх поэчĕ Валери Туркай пулчĕ. Иккĕмĕш фестивале 2019 çулта хутшăнакансене вара пултарулăх тĕлпулăвĕсем, кĕнеке хăтлавĕсем, поэзи перфомансĕсем, куравсем, куçару ыйтăвĕсемпе çыхăннă ăсталăх лаççисем кĕтрĕç. Поэзи уявне 150 ытла çын – вăл шутра Пушкăрт, Коми, Мари, Кабарда-Балкар, Мордва, Чечня, Чăваш республикисенчен, Аçтăрхан, Мускав, Питĕр, Тольятти хулисенчен паллă поэтсем, Шупашкарти культурăпа ӳнер, литература ĕçченĕсем хутшăнчĕç.

2020 çулхи çурла уйăхĕн 10-16-мĕш кунĕсенче Шупашкарта Наци ĕçĕсен Федераци агентстви тата Чăваш Республикин культура, национальноçсен ĕçĕсен тата архив ĕçĕн министерстви пулăшнипе, Чăваш Республикин наци библиотеки ертсе пынипе «Атăл асамачĕ» ятлă Раççейри тĕрлĕ халăхсен поэзийĕн фестивалĕ 3-мĕш хут кĕрлерĕ. Ăна Чăваш автономи облаçне йĕркеленĕренпе 100 çул тата чăваш поэзийĕн классикĕ К.В. Иванов çуралнăранпа 130 çул çитнине халалланă. Фестиваль тапхăрĕнче 5 лапам ĕçлерĕ, тĕрлĕ ăсталăх класĕ, «çавра сĕтел» тата ытти мероприяти иртрĕ.

Фестивалĕн тĕп пулăмĕсенчен пĕри – «Пĕрле» поэзи кăшăлĕ. Эпидемипе

çыхăннă лару-тăру кăткăс пулнине шута илсе фестивале онлайн мелĕпе йĕркелерĕмĕр. Апла пулин те хутшăнакан сахал мар: Раççейри 15 тăрăхран тата Азербайджан çĕршывĕнчен. Чăваш Енĕн паллă сăвăçисен: Юрий Сементерĕн, Светлана Асаматăн, Марина Карягинăн, Лидия Саринен, Раиса Сарпин, Дмитрий Поздеевăн тата çамрăк сăвăçсен Мальвина Петровăпа Лариса Петровăн сассисем янăрарĕç. Раççей çыравçисен пĕрлешĕвĕн правленийĕн ертӳçи Николай Федорович Иванов видеосаламĕ поэзи уявне усрĕ.

Фестиваль мĕнле иртнине Чăваш Ен наци телевиденийĕн эфирĕнче кăтартрĕç. Поэзи уявĕн материалĕсене Чăваш Республикин наци библиотекин Ютубри каналĕнче, социаллă тытăмсенче паян та курма пулать.

«Варкăш» литература клубĕ – Наци библиотекин çĕнĕ проекчĕ. Вăл чăваш кĕнекисене юратса вулакансене тăтăшах пĕрле пухать. Унăн тĕллевĕ: халăха, уйрăмах çамрăксене, чăвашла нумайрах вулама хавхалантарасси, чăваш литературин паха тĕслĕхĕсене халăх хушшинче анлă сарасси, çамрăк çыравçăсене хавхалантарасси, вулакансене чăваш чĕлхипе литературине юратма, хисеплеме вĕрентесси. Клуб ĕçне тĕрлĕ ӳсĕмри çынсем хутшăнаççĕ. Вĕсен хушшинче: студентсем, вĕрентекенсем, хаçат-журнал, радио-телевидени, издательство ĕçченĕсем, çыравçăсем, вулакансем. Паянхи куна 20 ытла аворăн пултарулăхне тишкернĕ. Пĕтĕмĕшле илсен, клуб ларăвĕсем кăсăклă та усăллă иртеççĕ. «Варкăш» хальхи чăваш литературин пурнăçĕнче тивĕçлĕ вырăн йышăнчĕ теме пулать.

Чăваш Республикин наци библиотеки хăйĕн проекчĕсемсĕр пуçне тĕрлĕ учрежденисемпе пĕрле чылай проектсем пурнăçлать. Вĕсенчен пĕри «**Чăваш литератури – вырăсла**» ятпа çулсерен иртекен вĕренӳ семинарĕ. Ăна 2018 çултанпа Раççейри куçару пĕлĕвне аталантармалли стратеги центрĕпе пĕрле ирттеретпĕр. Çак семинара илемлĕ куçару ыйтăвĕсемпе кăсăкланакансем, куçару ĕçне хутшăнас шухăшлисем, чăвашларан вырăсла куçаракансем хутшăнаççĕ. Вĕренӳ программине лекцисем, практика занятийĕсем, ăсталăх класĕсем тата консультацисем кĕчĕç. Семинар занятийĕсенче хатĕрленĕ куçарусене уйрăм кĕнекепе пичетлеме палăртрĕç. Экспертсен шутĕнче Санкт-Петербургри аслă куçару шкулĕн директорĕ Ирина Алексеева профессор тата Санкт-Петербургри патшалăх университечĕн нимĕç филологи кафедрин доценчĕ, Альбина Бояркина тăлмачă пулчĕç. 2021 çулхи çĕртме уйăхĕнче иртекен вĕренӳ семинарĕ çамрăк куçаруçăсем валли пулĕ.

Наци библиотекин пуçарăвĕпе йĕркеленĕ тепĕр проект – «Литература тĕлпулăвĕсем» акци. Вăл республикăра пурăнакансене Раççейри тата Чăваш Енри паллă çыравçăсемпе, публицистсемпе, чĕлхеçĕсемпе, музыкантсемпе, художниксемпе çывăхланма пулăшать. Чăваш çыравçисемпе тĕпчевçĕсем, журналистсем, Наци библиотекин ĕçченĕсем вулакансемпе республикăн тĕрлĕ районне çеç мар, юнашарти регионсене те тухса çӳреççĕ, вулакансемпе тата унта пурăнакан çыравçăсемпе тĕл пулаççĕ, чăваш кĕнеки, литератури çинчен калаçаççĕ, авторсен пултарулăхĕпе паллаштараççĕ. Шупашкарти, Улатăрти, Канашри, Çĕнĕ Шупашкарти, Сĕнтĕрвăрринчи, Элĕкри, Вăрнарти, Муркашри, Вăрмарти, Етĕрнери тата ытти тăрăхри вулавăшсенче туслă тĕлпулусем 2014 çултанпах иртеççĕ. Вулакансем Улькка Эльмен, Ангелина Павловская, Николай Максимов, Лидия Филиппова, Юрий Сементер, Арсений Тарасов, Лидия Сарине, Валери Туркай, Елена Светлая, Ордем Гали, Анатолий Хмыт, Людмила Сачкова тата ытти нумай-нумай чăваш çыравçипе тата журналисчĕпе курнăçса сăмахларĕç. Тĕлпулусенче вулакансем çыравçăсен пурнăçĕпе, пул-

тарулăхĕпе кăсăкланаççĕ, хайлавсенчи сăнарсемпе пĕрле вĕсен шăпишĕн пăшăрханнине пĕлтереççĕ, калем ăстисен малашнехи планĕсем çинчен ыйтаççĕ.

Чăваш çыравçисен эткерне упраса хăварас, информацие халăх патне çитерес тĕллевпе наци литературипе библиографи пайĕн ĕçченĕсем указательсемпе справочниксем хатĕрлеççĕ, электронлă базăсем йĕркелесе пыраççĕ. Чăваш литературипе çыхăннă библиографи указателĕсенчен пĕри – 2015 çулта тухнă «Чăваш литературоведенийĕпе критики: 1990-2010» указатель. Кунта 400 яхăн чăваш çыравçин ĕçĕ-хĕлне çутатса панă литературăна кĕртнĕ. Çавăн пекех тăван литературăн, литература тĕпчевĕн историйĕпе теорийĕн аталанăвĕн тĕп енĕсемпе те паллашма пулать. Ку кĕнекене шкулта ĕçлекенсем те, литература ĕçченĕсем те питĕ ырă сăмахсемпе кĕтсе илчĕç. Çавăн пекех юлашки çулсенче тухнă çак библиографи указателĕсене асăнса хăвармалла: пĕрне Геннадий Юмарт сăвăçа, куçаруçа, фольклориста, Чăваш АССР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченне, К.В. Иванов ячĕллĕ Чăваш Республикин Патшалăх премийĕн лауреатне халалланă; теприне филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕн Петр Яковлев (Петĕр Яккусен( сăвăçăн, чĕлхе тĕпчевçине, куçаруçăн пурнăçĕпе пултарулăхне халалланă. 2021 çулта филологи ăслăлăхĕсен докторĕн, литература тĕпчевçин Юрий Артемьевăн пурнăçĕпе пултарулăхне халалланă библиографи указателĕ кун çути курчĕ. Хальхи вăхăтра Михаил Юхма пурнăçĕпе пултарулăхне халалланă кăларăмĕпе ĕçлетпĕр.

Информаци технологийĕсем пурнăçа кĕрсе пынă май радио-телекуравра, хаçат-журналта, калаçура «электронлă библиотека», «автоматизациленĕ каталог», «виртуаллă курав», «онлайн-хăтлав», «электронлă кăларăмсем» тенине вулама-илтме пулать. Çĕнĕ технологисемпе анлăн усă курса Чăваш Республикин наци библиотеки «Наци электронлă библиотекине» – электронлă документсен пуххине йĕркелесе пырать. Вăл библиотека фончĕн пĕр пĕлтерĕшлĕ пайĕ. Кунта чăваш халăх культурипе ăслăлăхĕшĕн питĕ пĕлтерĕшлĕ тавра пĕлӳ ĕçĕсене, хаклă тата сайра тĕл пулакан чăваш тата вырăс чĕлхипе çырнă кĕнекесене, чăваш тата тĕнче культури аталанăвĕнче пысăк вырăн йышăнакан ĕçсене кĕртнĕ. Паянхи кун тĕлне нацин электронлă библиотекинче 40 пин ытла документ вырăн тупнă. Вĕсен хушшинче чăваш çыравçисен илемлĕ литература хайлавĕсем, вĕсен пурнăçне тĕпчесе çырнă литература пысăк вырăн йышăнать. Электронлă библиотекăна кĕртнĕ ĕçсен хронологи рамки çук. Вĕсемпе район-хула библиотекисенче е интернет урлă килте те паллашма пулать. Автор прависене пăхăнса кĕртнĕ документсем пĕр пăтăрмахсăрах уçăлаççĕ, вĕсемпе паллашма, вулама май пур. Чăваш Республикин кашни районăн тĕп библиотекинче Наци библиотекин виртуаллă вулав пӳлĕмĕ ĕçлет. Интернетра уçăлман кашни документах кунта уçса вулама, унпа паллашма пулать. Унсăр пуçне Чăваш Республикин наци библиотекин электронлă библиотекинчи материалсемпе чăвашсем йышлă пурăнакан регионсенчи библиотекăсенче те виртуаллă вулав пӳлĕмĕсенче паллашма май пур. Çакна та палăртса хăварас пулать, электронлă библиотекăри документсем чăваш халăх историне, культурине, уйрăм çынсем, предприятисемпе организацисем, е ытти сферăсем аталланнине уçса параççĕ. Вĕсен шутĕнче хаçат-журнал, иртнĕ тапхăрта е XXI мĕш ĕмĕрте пичетленнĕ кĕнекесемпе статьясем, аудио е видеоматериалсем, сăн ӳкерчĕксемпе архив докуменчĕсем, тата ытти те.

**Библиотекăн электронлă кăларăмсем** те литература аталанăвĕшĕн пĕлтерĕшлĕ. Вĕсен шутĕнче: «Константин Иванов. Чăваш классикине вулатпăр», «Чăваш сăмахĕн ӳнерçи – Микулай Илпек», «Константин Иванов – чă-

ваш поэзийĕн классикĕ», «Проза ăстин пурнăçĕпе ăраскалĕ» /Чăваш халăх çыравçи Хĕветĕр Уяр çуралнăранпа 100 çул çитнĕ май/, «Тăван ен юрăçи» /Чăваш халăх поэчĕ Александр Алка çуралнăранпа 100 çул çитнĕ тĕле/, «Чунра хĕмленнĕ йĕркесем...» /Чăваш халăх поэчĕ Юрий Сементер пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен/, «Чăваш халăх поэчĕ Ухсай Яккăвĕ», «Çулăмра шăраннă йĕркесем: чăваш писателĕсем - Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче» тата ыттисем те. Чăваш çыравçисен пурнăçĕпе пултарулăхне халаллана мультимеди кăларăмсем «Çеçпĕл Мишшин поэзи тĕнчи», «Хĕнпе хĕрсе туптаннă сассăм» /чăваш поэчĕ Митта Ваçлейĕ çуралнăранпа 100 çул çитнĕ май/, «Манăн çăлтăр тӳпере» /Чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкай çуралнăранпа 100 çул çитнĕ май/ Пĕтĕм Раççейри электронлă тавра пĕлӳ кăларăмĕсен «Край в формате DVD» конкурсĕнче пĕрремĕш вырăн йышăннă. Вĕсемпе библиотекăра паллашма май пур.

Виртуаллă куравсем те Чăваш Енĕн паллă çыравçисен пурнăçĕпе, ĕçĕхĕлĕпе, хайлавĕсемпе паллаштараççĕ: «Чунра хĕмленнĕ йĕркесем...» /Юрий Сементер пултарулăхĕ çинчен/; «Перо ăстин пурнăçĕпе шăпи» /Хветĕр Уяр çуралнăранпа 100 çул çитнĕ тĕле/; «Вăрçăн сăваплă страницисем» /Чăваш Ен çыравçисем Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче/, «Çутă çăлтăр пек пурнăç» /Ираида Петрова çыравçă çуралнăранпа 100 çул çитнĕ тĕле/, «Чăваш культурин патриахĕ И.Я. Яковлев» тата ыттисем те.

2014 çултанпа Наци библиотекин **Ютуб каналĕ** ĕçлет. Çак канал библиотекăпа, унăн ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарать. Чăвашсен паллă çыннисем, пулăмсем тата фактсем çинчен интереслĕ каласа кăтартать. Иртнĕ çулта кăна «Ĕмĕр хушшинчи чăваш литератури» ятпа «çавра сĕтел» онлайн мелĕпе иртрĕ. «Çавра сĕтеле» филологи ăслăлăхĕсен докторĕ Юрий Артемьев, филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕсем Екатерина Якимова, Елена Чекушкина, Борис Чиндыков çыравçă, драматург хутшăнчĕç. Вĕсем сӳтсе явнă ыйтусенчен пĕри – çыравçăн хальхи обществăри вырăнĕ. Çавăн пекех Ютуб каналпа чăваш литературипе çыхăннă лекцисен ярăмĕ иртрĕ. Вĕсене филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ Эдуард Фомин вуларĕ.

Кăçал «Тăван Атăл» литературăпа культура тата искусство журналĕ 90 çулхи юбилейне паллă тунă май Чăваш Республикин наци библиотекинче кăрлач уйăхĕн 29-мĕшĕнче **«Тăван Атăл» журналăн наци культуринчи вырăнĕ»** ятпа «çавра сĕтел» онлайн мелĕпе библиотекăн Ютуб-каналĕнче иртрĕ. «Çавра сĕтел» ĕçне Юрий Артемьев профессор, Арсений Тарасов, Владислав Николаев, Василий Кервен çыравçăсем тата Николай Осипов литература тĕпчевçи хутшăнчĕç. Кунта чылай çивĕч ыйтăва пăхса тухрĕç: журналăн пуян историйĕпе кун-çулĕ, унăн чăваш литературинчи вырăнĕ, çамрăк çыравçăсене малалла аталантарас ĕçри пĕлтерĕшĕ, пĕтĕмĕшле чăваш литературин шăпипе паянхи лару-тăрăвĕ. Кун пек мероприятисем малалла та иртессе шанатпăр.

Çапла вара Чăваш Республикин наци библиотеки паян кĕнекесене упрамалли çурт кăна мар, информаципе культура центрĕ те. Вулавăшăн тĕп тĕллевĕ – кĕнеке урлă çут ĕçпе культурăна сарасси, чăваш халăх эткерне пуçтарса упраса хăварасси, халăх патне çитересси. Малашне те хамăр ĕçе кăсăклă та нумай енлĕ туса пыма тăрăшăпăр.

**Полина СЕМЕНОВА, Галина СОЛОВЬЕВА,**
**библиотека ĕçченĕсем**